Рег. ном. 97.
41-31392

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬ ЗАМЕСТИТЕЛĔ ТАТА ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ РАДИО ТĂРĂХ ТУХСА КАЛАНĂ СĂМАХ

*1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕ*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1941

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*



СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ тата Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. МОЛОТОВ юлташ

1 июня 41
97.

# СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛЬ ЗАМЕСТИТЕЛĔ ТАТА ЮТÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ РАДИО ТĂРĂХ ТУХСА КАЛАНĂ САМАХ

*1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕ*

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ✻ 1941

# СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ГРАЖДАНСЕМПЕ ГРАЖДАНКĂСЕМ!

Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Сталин юлташ мана çакăн çинчен каласа пĕлтерме хушрĕç:

Паян, ирхине 4 сехетре, Совет Союзне нимĕнле претензисем те тăратмасăр, вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕр, Германи çарĕсем пирĕн çĕршыв çине тапăннă, нумай вырăнсенче пирĕн чикĕсем çине атака тунă, пирĕн хуласем çине — Житомир, Киев, Севастополь, Каунас тата ытти хăшпĕр хуласем çине хăйсен самолечĕсем çинчен бомбăсем пăрахнă, çавăн чухне икçĕр çын ытла вĕлерне тата амантнă. Тăшман

самолечӗсем ҫавӑн пекех тата Румынипе Финлянди территорийӗсем ҫинчен те килсе тапӑннӑ тата артиллерирен пенӗ.

Пирӗн ҫӗршыв ҫине ҫакӑн пек ирсӗррӗн тапӑнни цивилизациллӗ халӑхсен историйӗнче халиччен курман-илтмен ултав пулса тӑрать. ССР Союзӗпе Германи хушшинче пӗр-пӗрин ҫине тапӑнмалла марри ҫинчен договор тунӑ пулин те тата Совет правительстви ҫак договорӑн условийӗсене пурне те ырӑ кӑмӑлпа пурнӑҫа кӗртсе пынӑ пулин те, Германи пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнчӗ. Ҫак договор вӑйра пулнӑ вӑхӑтра ҫав договора пурнӑҫлани тӗлӗшпе ССР Союзне Германи правительстви пӗр претензи те тӑратма пултарайман пулин те, Германи пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнчӗ. Совет Союзӗ ҫине ҫакӑн пек

вăрă-хурахла тапăннишĕн пĕтĕмĕшпех Германин фашистла правителĕсем ответлă пулса тăраççĕ.

Германи пирĕн çĕршыв çине тапăннă хыççăн тин Германин Мускаври посолĕ Шуленбург ирхине 5 сехет те 30 минутра хăйĕн правительстви ячĕпе мана, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне, çакăн çинчен пĕлтерчĕ: Хĕрлĕ Çар чаçĕсене Германин хĕвелтухăçри чиккисем патне пухнă май, Германи правительстви ССР Союзне хирĕç вăрçăпа тухма йышăнчĕ, терĕ.

Çакăн çине ответлесе эпĕ Совет правительстви ячĕпе çапла пĕлтертĕм: Германи правительстви юлашки минутченех Совет правительствине нимĕнле претензисем те тăратман, Совет Союзĕн мире юрататакан позицине пăхмасăрах Германи СССР çине тапăнчĕ,

çапла вара фашистла Германи тапăнакан енĕ пулса тăрать, терĕм.

Совет Союзĕн правительстви хушнипе, эпĕ çавăн пекех тата çакна пĕлтерме тивĕç: пĕр пунктра та пирĕн çарсем тата пирĕн авиаци чикĕсене пăсни пулман, çавăнпа та паян ирхине Румыниri радио совет авиацийĕ Румыни аэродромĕсем çине пенĕ тесе пĕлтерни пĕтĕмпех суя сăмах тата провокаци пулса тăрать. Çавăн пекех тата ССР Союзĕпе Германи хушшинче тунă пакта Совет Союзĕ пурнăçламасть тесе, айăпламалли материала кая юлса та пулин хатĕрлеме хăтланакан Гитлерăн паянхи мĕнпур декларацийĕ те суя сăмах тата провокаци пулса тăрать.

Халĕ, Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн, çак вăрă-хурахла тапăнăва сирсе яма тата Германи çарĕсене пирĕн

тăван çĕршыв территорийĕнчен хăвалаСа кăларма Совет правительстви хамăрăн çарсене приказ пачĕ.

Çак вăрçа пире Германи халăхĕ мар, Германири рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци мар илсе кĕчĕç, — вĕсем асап тӳснине эпир лайăх ăнланатпăр, — çав вăрçа пире Германин юншăн çунакан фашистла правителĕсен ушкăнĕ, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие, Грецие тата ытти халăхсене пусмăр айне тунă ушкăнĕ илсе кĕчĕ.

Совет Союзĕн правительстви çакна çирĕппĕнех шанса тăрать: пирĕн паттăр çарпа флот тата Совет авиацин хăюллă соколĕсем хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи, совет халăхĕ умĕнчи ти-

вĕçне чыслăн пурнăça кĕртĕç тата агрессора тĕппипех çапса çĕмĕрĕç.

Иртĕнсе кайса тапăннă тăшмана хирĕç пирĕн халăх пирвайхи хут çеç мар çапăçать. Хăй вăхăтĕнче, Россия çине Наполеон поход тунă чухне, пирĕн халăх отечественнăй вăрçă туса ответленĕ, вара Наполеон поражени тӳснĕ, пĕтсе ларнă. Пирĕн çĕршыва хирĕç çĕнĕ поход пуçаракан, мăнкăмăлланса кайнă Гитлерпа та çавăн пекех пулĕ. Хĕрлĕ Çар тата пирĕн пĕтĕм халăх тăван çĕршывшăн, чыслăхшăн, ирĕклĕхшĕн халĕ те çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пырĕç.

Совет Союзĕн правительстви çакна çирĕппĕн шанса тăрать: пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх, мĕнпур рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен обязанноçĕ-

сене, хӑйсен ĕçне тивĕçлĕ ӑнланулӑхпа туса пырĕç. Пирĕн пĕтĕм халӑх халĕ нихӑçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çара, Флота тата Авиацине мĕн кирлине пурне те тӑратмашкӑн, тӑшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хӑйне тата ыттисене те чӑн-чӑн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинӑллӑ, организациллĕ пулма тата хӑйĕн пурнӑçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла.

Правительство сире, Совет Союзĕнчи гражданкӑсемпе гражданкӑсене, пирĕн мухтавлӑ большевикла парти тавра, пирĕн Совет правительстви тавра, пирĕн аслӑ çулпуç Сталин юлташ тавра хамӑрӑн ретсене татах та тачӑрах пĕтĕçтерме чĕнет.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Тӑшмана çапса аркатӑпӑр. Çĕнтерӳ пирĕн алӑра пулĕ.

—

Редактор перевода **В. А. Долгов.**

Подписано к печати 28. VI-41 г. НТ 3099 Заказ № 338. Тираж 10.000 экз.
Уч. авт. л. 1,5 Объем $^{3}/_{4}$ п/л.

Тип. № 1, Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР,
г. Чебоксары, улица Володарского, 5.

Цена 10 коп.

Хакĕ 10 пус.

ВЫСТУПЛЕНИЕ ПО РАДИО ЗАМЕСТИТЕЛЯ ПРЕДСЕДАТЕЛЯ СОВЕТА НАРОДНЫХ КОМИССАРОВ СОЮЗА ССР и НАРОДНОГО КОМИССАРА ИНОСТРАННЫХ ДЕЛ тов. В. М. МОЛОТОВА

22 июня 1941 г.

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР